28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
31
ЮНКУН
212 (6963) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховнӑй Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Сывӑ пултӑр аслӑ Совет Союзӗ—пирӗн Тӑван ҫӗршыври халӑхсен телейӗпе мухтавлӑхӗн шанчӑклӑ тӗрекӗ!

(ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛӐ АСЛӐ РЕВОЛЮЦИ ПУЛНӐРАНПА 28 ҪУЛ ҪИТНӖ ТӖЛЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧЕ ЧЕНСЕ КАЛАНИСЕНЧЕН).

Суйлава хатӗрленесси тата вырӑнти советсен задачи

П. БАХМУРОВ,
РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ

Социализм ҫӗнтерни ҫӗршывра Сталинла Конституци социализмлӑ общество пытӑмӗн никӗсне тата Совет государствин чӑн-чӑн демократиллӗ организацине законпа ҫирӗплетсе пачӗ.

Советӑн демократиллӗ стройӗ Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра юнлӑ ҫапӑҫусенче ҫав тери хаяр тӗрӗслевсене тӳссе иртерчӗ.

Пирӗн халӑх демократин хаяр тӑшманне—нимӗҫ фашизмне хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешни тата тылра ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлени, вӑрҫӑра вӑхӑтлӑх ӑнӑҫсӑрлӑхсем пулнӑ вӑхӑтра та, Совет государствин вӑй-хӑватне вуншар хут ӳстерчӗ, пирӗн Тӑван ҫӗршыври ӗҫсыннисем Совет влаҫӗпе большевиксен партине шанса тӑнине кӑтартса пачӗ. Ҫаксем пурте ӗнтӗ пирӗн совет демократийӗ пӗтӗм халӑх демократийӗ пулнине кӑтартса параҫҫӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра ҫӗнтерӳ тунипе пирӗн ҫӗршыв хӑйӗн демократиллӗ стройне хӳтӗлесе хӑварчӗ, Совет влаҫне сыхласа хӑварчӗ.

Халӗ Совет Союзӗнчи халӑхсем совет демократийӗн аслӑ уявне хатӗрленеҫҫӗ.

Вӑрҫӑ пӗтнине пула тата I-мӗш созыври СССР Верховный Совечӗн полномочийӗн срокӗ тухнине пула, 1946 ҫулхи февралӗн 10-мӗшӗнче СССР Верховный Советне суйлама палӑртнӑ.

I-мӗш созыври СССР Верховный Советне суйланӑ чухнехи пекех, совет халӑхӗ хӑйӗн депутачӗсене пурне те тивӗҫ, пӗр тан тата тӳрех суйламалли правӑпа вӑрттӑн сасӑласа суйлать.

Халӗ СССР Верховный Советне суйлас ӗҫе хатӗрленме тытӑннӑ. Пирӗн ҫӗршывӑн суйлав Законне—СССР Верховный Советне суйламалли Положение, пулас суйлавӑн йӗркине кӑтартса паракансене, ӗҫсыннисене ӑнлантарас тӗлӗшпе совет, парти, профсоюз тата обществӑллӑ ытти организацисем те питӗ пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ.

Хуласемпе ялсенчи ӗҫсыннисене Положение вӗрентес ӗҫе кӑтартуллӑн организацилени халӗ вырӑнти советсен суйлава хатӗрленес тӗлӗшпе тумалли чи малти вырӑнта тӑракан задачисенчен пӗри пулса тӑрать.

Анчах та вӗсен задачисем ҫакӑнпах пӗтмеҫҫӗ-ха.

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑҫалхи октябрӗн 11-мӗшӗнче ҫирӗплетнӗ суйлав Положенийӗ вырӑнти советсем ҫине татах та ытти тӗрлӗ паха задачӑсем хурать.

Вӗсенчен чи ҫывӑх вӑхӑтра тумалли задача—суйлавҫӑсен списокӗсене тӑвасси. Суйлавҫӑсен списокӗсене хулари, районри, поселокри, ялти, вулӑсри Советсен исполкомӗсем, ҫар чаҫӗсенче—ҫав чаҫсен командованийӗ тӑваҫҫӗ.

Суйлавҫӑсен списокӗ вӑл—государствӑн питӗ паха документчӗ. Ӑна питӗ тӗплӗн туса хатӗрлемелле. Ҫав списоксенче пулма пултаракан кирек епле тӗрӗсмарлӑх та — суйлавҫӑн хушаматне, ятне, ашшӗ ятне пӑсса ӑрӑхлатни, хӑҫан ҫуралнине тӗрӗс мар кӑтартни—ӗҫсыннисен суйлав правине хӗсме пултарать.

Уйрӑм гражданисене суйлавҫӑсен списокне кӗртмесӗр хӑварни вара татах та кӳренмелле тӗслӗх пулса тӑрать.

Суйлавҫӑсен списокне тӑвасси вӑл мӗнпур халӑха ҫырса тухассине, е суйлав Положенинче кӑтартман сведенисем пухассине пӗлтермест.

Суйлав Положенийӗ тӑрӑх, районри, хуларн, поселокри, ялти Советсен исполкомӗсем сулавччен 30 кунран кая юлмасӑр суйлавҫӑсен списокӗсене е совет ҫуртӗнче е суйлав участокӗнче кӑларса ҫакмалла, е суйлавҫӑсене вӗсемпе урӑх майпа паллаштармалла.

Суйлавҫӑсене списоксемпе суйлав участокӗн ҫуртӗнче паллаштма май пани списоксене тӗрӗслес ӗҫе тата пулма пултаракан йӑнӑшсене тупас ӗҫе ҫӑмӑллатать.

Списокра мӗнле те пулин тӗрӗсмарлӑх тупсан, суйлавҫӑн ҫав списока туса хатӗрленӗ советӑн исполкомне заявлени памалла. Советӑн исполкомӗ ҫав заявлениие виҫӗ кун хушшинче пӑхса тухса хӑйӗн решенине заявлени паракан ҫынна пӗлтермелле. Заявлени паракан ҫын совет исполкомӗн решенийӗпе килӗшмест пулсан, вӑл халӑх судне жалоба пама пултарать. Халӑх сучӗн виҫӗ кун хушшинче ҫав жалобӑна пӑхса тухса, хӑйӗн решенине заявлени паракан ҫынна тата совет исполкомне пӗлтермелле.

Суйлава хатӗрленес тӗлӗшпе законӑн ҫакӑн пек требованийӗсене ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пыни ССР Союзӗнчи суйлав правипе усӑ куракан пур гражданисене те суйлава хутшӑнтарма май памалла.

Ҫывӑх вӑхӑтрах суйлав участокӗсем тӑвас тӗлӗшпе питӗ пысӑк ӗҫ туса иртермелле. Суйлав Положенийӗ тӑрӑх, вӗсене ӗҫсынни депутачӗсен хулари, районри тата уездри Совечӗсен исполкомӗсем тумалла.

Суйлав участокӗсене суйлавччен 45 кунран кая юлмасӑр тумалла.

Суйлав ӑнӑҫлӑ иртесси шӑпах ӗнтӗ ҫак суйлав участокӗсем мӗнле ӗҫленинчен килнине питӗ ҫирӗп асра тытса тӑмалла.

Суйлав Положенийӗ тӑрӑх, облаҫри тата крайри Советсен исполкомӗсен суйлавччен 50 кунран кая юлмасӑр Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округри суйлав комиссийӗсене туса ҫирӗплетмелле.

Хулари, районри тата уездри Советсен исполкомӗсен суйлавччен 40 кунран кая юлмасӑр 130.000 ытла участокри суйлав комиссийӗсене туса ҫирӗплетмелле.

Суйлав комиссийӗсене туса ҫирӗплетесси вӑл—суйлав кампанийӗн организациллӗ питӗ паха ыйтӑвӗ пулса тӑрать.

Суйлав комиссийӗсен составӗн кандидачӗсене рабочисемпе служащисен профсоюз организацийӗсем, кооперации организацийӗсем, коммунистсен партийӗн организацийӗсем, ҫамрӑксен организацийӗсем, культурӑпа техника тата наука обществисем, ӗҫсыннисен законлӑ йӗркепе регистрациленӗ ытти обществӑллӑ организацийӗсемпе обществисем тӑратаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата суйлав комиссийӗсен составӗн кандидачӗсене предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсем, ҫар чаҫӗсенчи ҫар ҫыннисен пухӑвӗсем, колхозсенчи, ялсемпе вулӑссенчи хресченсен пухӑвӗсем, совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсем тӑратаҫҫӗ.

Халӗ ӗнтӗ Тӗп суйлав Комиссин составне ҫирӗплетнӗ.

Ҫывӑх вӑхӑтрах Округри тата участокри суйлав комиссийӗсене кандидатсем тӑратма тытӑнаҫҫӗ.

Суйлав комиссийӗсен составне кандидатсем тӑратнӑ чухне суйлав комиссийӗсем кӑткӑс та ответлӑ ӗҫ тӑвассине пӗр самантлӑха та манма кирлӗ мар. Ҫавӑнпа та комиссие политика тӗлӗшӗнчен тӗрӗсленӗ, государство ӗҫӗнче тата обществӑллӑ организацисен ӗҫӗнче хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ опытлӑ юлташсене кӗртме тӑрӑшмалла.

Обществӑллӑ организацисемпе ӗҫсыннисен обществисем суйлав комиссийӗсен составне кандидатсем тӑратас ӗҫе массӑсене те активлӑн хутшӑнтармалла. Суйлав комиссийӗсен составне кандидат тӑратас ыйтӑва бюрократла, массӑсене хутшӑнмасӑр татса пама хӑтланнине ҫийӗнчех пӗтерсе пымалла.

Пулас суйлавра суйлав комиссийӗсен пӗлтерӗшӗ, иртнӗ суйлавпа танлаштарсан, татах та пысӑкрах пулать, вӗсен ответлӑрах задачӑсене татса памалла пулать, мӗшӗн тесен ҫӗнӗ Положени вӗсен прависене чылай пысӑклатнӑ.

Округри суйлав комиссийӗсене хӑйсен сулав округӗнче суйлав вӑхӑтӗнче СССР Верховный Советне суйламалли Положение тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пынине тӗрӗслесе тӑма тата участокри суйлав комиссийӗсем тӗрӗс мар ӗҫлени ҫинчен панӑ жалобӑсене пӑхса тухма право панӑ. Ҫавӑн пекех вӗсем суйлав участокӗсем тӑвас ӗҫе, суйлавҫӑсен списокӗсене тӑвас ӗҫе тата ҫав списоксемпе суйлавҫӑсене паллаштарас ӗҫе те тӗрӗслесе пыраҫҫӗ, суйлав участокӗсене суйлав бюллетенӗсем хатӗрлесе параҫҫӗ.

СССР Верховный Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидата регистрацилесе вӑхӑтрах Округри суйлав комиссийӗсем Конституципе тата суйлав Положенийӗнче кӑтартнӑ требованисене мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине ҫирӗппӗн тӗрӗслесе пыраҫҫӗ. Участокри суйлав комиссийӗсенчен илнӗ материалсем тӑрӑх сасӑлани результатне шутласа кӑларнӑ хыҫҫӑн тата суйланӑ депутата ӑна депутата суйлани ҫинчен ӗнентерекен удостоверени панӑ хыҫҫӑн округра суйлав кампанийӗ пӗтет.

Участокри суйлав комиссийӗсен суйлавҫӑсен списокӗсенчи тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен ҫырнӑ заявленисене йышӑнса, вӗсене ҫав списока туса хатӗрленӗ Совет исполкомне пӑхса тухма тӑратмалла. Суйлав кунӗнче вӗсем суйлав бюллетенӗсене йышӑнаҫҫӗ, депутата суйлама палӑртнӑ кашни кандидатшӑн мӗн чухлӗ сасӑ панине шутласа кӑлараҫҫӗ. Ҫак хисеплӗ те ответлӑ задачӑна татса парас тӗлӗшпе 1,5 миллион ҫынна яхӑн ӗҫлемелле. Вӗсенчен нумайӗшӗ ҫак ӗҫе чи матанхи хут хутшӑнаҫҫӗ. Суйлав комиссийӗсем кӑтартуллӑ ӗҫлетчӗр тесен, вӗсене тӑтӑшах пулӑшса тата большевикла ертсе пымалла.

Суйлав комиссийӗсене туса ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑнах вырӑнти Советсен исполкомӗсемпе парти организацийӗсен ССР Союзӗн Конституципе тата СССР Верховный Советне суйламалли Положение тӗплӗн вӗрентес ӗҫе организацилемелле. Суйлав документчӗсен формипе тата вӗсене ҫырас йӗркепе паллаштарасси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла.

Суйлава организацилесси тата ӑна ирттерес техника политика ыйтӑвӗ пулса тӑрать. Малтанлӑха «технически» ансат ӗҫ пек курӑнакан ӗҫ те политикӑллӑ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать, мӗншӗн тесен вӑл ӗҫсыннисен интересӗсене пырса тивет.

Суйлав кампанине ӑнӑҫлӑн ирттерес тесен тата суйлав комиссийӗсен ӗҫӗсем ӑнӑҫлӑ пулса иртчӗр тесен, вырӑнти Совет исполкомӗсен халех суйлав комиссийӗсене валли ҫуртсем хатӗрлесе хумалла.

Сасӑламалли ҫурт пысӑкӑшӗ, вырнаҫӑвӗ тата оборудованийӗ тӗлӗшӗпе закон кӑтартнине тивӗҫлӗ пулмалла.

Суйлав кампанине ирттерме Совет правительстви мӗн кирлине пурне те парать. Положенин 11-мӗш статьинче: СССР Верховный Советне суйланӑ чух пулакан тӑкаксене государство тӳлет, тесе каланӑ.

Вырӑнти Совет исполкомӗсен задачи халӗ кашни суйлав участокне, кашни суйлав комиссине мӗн-мӗн кирлине шута илесси ҫеҫ мар, ҫак кирлӗ япаласене пурне те тупса парасси пулса тӑрать. Суйлав комиссийӗсене йӗркеллӗ ӗҫлеме кирлӗ условисем туса парас тӗлӗшпе тӗрлӗ сӑлтавсем ҫине ярса ӗҫе вӑраха хӑварнине халӗ чӑтма ҫук.

Суйлава хатӗрленес ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ чылай чухне технически работниксене суйласа илме тата вӗсене вӗрентсе хатӗрлеме пӗлнинчен те нумай килет. Вырӑнти совет руководителӗсен суйлав тӗлӗшӗпе тумалли «технически» чи ансат ӗҫе те тӗрӗсленӗ, халӑха паранӑ ҫынсене ҫеҫ шанса пама юранине пӗр самантлӑха та манма кирлӗ мар. Халӗ ҫав работниксене уйӑрма тата вӗсене вӗрентсе хатӗрлеме тытӑнмалла.

* * *

СССР Верховный Советне суйламалли ҫӗнӗ Положени пирӗн аслӑ Тӑван ҫӗршыври халӑхӑн пур сийӗсене те суйлава хутшӑнма чи лайӑх условисем туса парать. 1946 ҫулхи февралӗн 10-мӗшӗ—суйлав кунӗ—пирӗн совет демократийӗн пӗтӗм халӑх уявӗ пулать. Пирӗн халӑх, ҫӗнтерӳҫӗ-халӑх, тӗнчери чи демократиллӗ суйлав системийӗ тӑрӑх, Совет ҫӗршывӗн аслӑ органне суйлать.

Государство влаҫӗн вырӑнти органӗсем пӗтӗм халӑхӑн ҫак уявне хатӗрленес тӗлӗшпе мӗн кирлине пурне те туса парассишӗн нимӗн иккеленмелли те ҫук.



А. А. АНДРЕЕВ

АНДРЕЙ АНДРЕЕВИЧ АНДРЕЕВ ЮЛТАША

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Сире, коммунистсен партийӗпе Совет государствин питех те паллӑ деятельне, Эсир аллӑ ҫул тултарнӑ кун хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

Хаклӑ Андрей Андреевич, Сире нумай ҫул хушши пурӑнса Тӑван Совет ҫӗршывӗшӗн пултаруллӑ ӗҫлеме пӗтӗм чунтан сывлӑх сунатпӑр.

ПӖТӖМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧЕ.
ССР СОЮЗӖН ХАЛӐХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧЕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

А. А. Андреев юлташа Ленин орденӗпе наградӑласси ҫинчен

СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ А. А. Андреев юлташ ҫуралнӑранпа 50 ҫул тултарнӑ май тата вӑл партипе совет халӑхӗшӗн питех те паллӑ ӗҫсем тунине шута илсе, Андрей Андреевич Андреев юлташа Ленин орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи октябрӗн 29-мӗшӗ.

Октябрь уйӑхӗ—государствӑна тырӑ, ҫӗрулми, пахчаҫимӗҫ парса татмалли тата авӑн ҫапса пӗтермелли уйӑх

Ӗҫе тӗрӗс организацилемелле

ТӐВАЙ. Районти малта пыракан колхозсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра ӗҫлемелли уйӑхлӑха хутшӑнса, тырпула кӗске срокра пухса кӗртсе, государствӑна обязательство тӑрӑх тырӑ тата ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ памалли плана ӑнӑҫлӑн тултарчӗҫ. Акӑ, «Новый путь» колхоз (председателӗ А. Ахтямов юлташ) кӑҫал 368 гектар тырпула 20 ӗҫкунӗнче пысӑк пахалӑхпа вырса пуҫтарса, октябрӗн 24-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех ҫапса пӗтерчӗ. Ку колхоз государствӑна тырӑ памалли плана сентябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне тултарса, планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне 100 пӑт тырӑ пачӗ. Ҫавӑн пекех колхоз государствӑна ҫӗрулми, пахчаҫимӗҫ тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли плана та тултарчӗ. «Трудовой путь» колхоз государствӑна тырӑ парса татнӑ, октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапса пӗтернӗ. «Пламя», «8-ое Марта», «Звезда», «Первое мая», Ленин, Мичурин ячӗсемпе тӑракан колхозсенче те кунӗн-ҫӗрӗн авӑн ҫапаҫҫӗ. «Социализм» колхозра авӑн ҫапнӑ ҫӗрте шыв вӑйӗпе усӑ кураҫҫӗ.

Анчах та, пӗтӗмӗшпе илсен, район чӑтма ҫук юлса пырать. Октябрӗн 23-мӗшӗ тӗлне районри колхозсем плана капан хывас енӗпе 79 процент, авӑн ҫапас енӗпе 76 процент, ҫӗрулми кӑларас енӗпе 77 процент, кӗрхи ҫӗртме тӑвас енӗпе пурӗ те 35 процент ҫеҫ тултарнӑ. Районра уйрӑмӑнах «Коммунар», «Красная Армия», «25-ое Октября», Смидович ячӗпе тӑракан, «Большевикла колхозшӑн», «КИМ» колхозсем юлса пыраҫҫӗ.

«Коммунар» колхоз районра чи кая юлса пыракан колхозсенчен пӗри шутланать. Кунта вырса пухнӑ 422 гектар ҫинчи тырпултан 150 гектар ҫинчи кӗлтесене кӑна капана хывнӑ. Сурхи тырӑсене вырса пӗтермен. Колхоз ҫакӑн пек юлса пыни чи малтанах ӗҫ дисциплини ытла та япӑхса кайнинчен, ӗҫлеме пултаракан пур ҫынсене те ӗҫе явӑҫтарманнинчен килет. Колхозниксен 50—60 процентӗ ҫеҫ ӗҫе тухаҫҫӗ, ыттисем вара килте лараҫҫӗ. Ӗҫе ирхине 10 сехетре тухаҫҫӗ те каҫхине 4—5 сехетрех киле таврӑнаҫҫӗ. Кӑнтӑрла апат ҫиме кӗрсен 2 сехет ытла ирттереҫҫӗ. 1-мӗш бригадӑра ӗҫе 62 ҫын тухмалла пулсан, октябрӗн 22—23-мӗшӗсенче 16—18 ҫын кӑна тухнӑ. Хӑшпӗр кунсенче унтан та сахалтарах тухнисем те пулнӑ. Ҫавӑн пекех 2-мӗш бригадӑра та ӗҫ дисциплини чӑтма ҫук япӑх. Акӑ, Е. Баркова, А. Лаптина, А. Кузьмина, М. Осипова колхозницӑсем октябрь уйӑхӗнче пӗр кун та ӗҫе тухман. Вӗсем кӑҫал пурӗ те 40—70 ӗҫкунӗ кӑна тунӑ.

Агитаторсем колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче нимӗн те тумаҫҫӗ. Ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти учительсем колхозниксем хушшинче ӗҫлеме мар, колхоз правленинче те пачах пулмаҫҫӗ. Кӑҫал колхозри стена хаҫачӗ пурӗ те пӗр номер, бригадӑсенчи боевой листоксем иккӗшер номер кӑна тухнӑ.

Ҫӗнӗ Пуянкассинчи «Большевикла колхозшӑн» колхоз та ялхуҫалӑх ӗҫӗнче питех те юлса пырать. Колхоз тырӑ памалли графика тӑтӑшах пӑсать. Колхозӑн пурӗ 549 гектар тырӑ пулнӑ. Паянхи куна вара 190 гектар ҫинчи кӗлтене капана хывса пӗтермен. Авӑна ытла та вӑрахӑн ҫапаҫҫӗ Кунта та авӑн ҫапма ирхине 9—10 сехетре тытӑнаҫҫӗ те каҫхине 4—5 сехетрех ӗҫрен кӗреҫҫӗ. Бригадирсем колхозниксем ӗҫленӗ ҫӗрте сахал пулаҫҫӗ, кам мӗнле ӗҫленине тӗрӗслесе пымаҫҫӗ. Колхозра ӗҫ дисциплини япӑххине пула 25 гектар ҫӗрулмие кутаранччен те кӑларман. Ҫавна пула колхоз государствӑна ҫӗрулми парса татман.

Районри ҫӗрӗҫ пайӗ юлса пыракан колхозсене нимӗнле пулӑшу та памасть. Унӑн работникӗсем начар ӗҫлекен колхозсене ӑнсӑртран кӑна пырса каяҫҫӗ.

В. ИЛЬИН.

„Зерно" колхоз юлса пырать

МУРКАШ. Панкли ял Советӗнчи «Зерно» колхоз ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче юлса пырать. Колхоз председателӗ пулнӑ Васильев колхоза тивӗҫлипе ертсе пыманнипе кура, колхозниксем ӑна ӗҫрен хӑтарса, ун вырӑнне Порфирьев юлташа лартрӗҫ, анчах та ӗҫсем малалла кайни курӑнмасть-ха. Колхозӑн 90 гектар ҫинчи тырра ҫапмалла. Государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе те колхоз чӑтма ҫук юлса пырать. Обязательство тӑрӑх 458 центнер тырӑ парас вырӑнне, октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне пурӗ те 141 центнер кӑна леҫнӗ, анчах та хӑйсем вара авӑн ҫапма васкамаҫҫӗ. Кӗлте турттарнӑ ҫӗрте транспорт ҫитменнипе аптӑраҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах колхозра кӳлме юрӑхлӑ 4 вӑкӑр пур, вӗсене ӗҫе вӗрентме тытӑнман.

Колхозра ӗҫ дисциплини япӑхса кайнӑ. Колхозниксем ӗҫе кӑнтӑрла 10—11 сехетсенче тухаҫҫӗ те каҫченех пӑрахса кӗреҫҫӗ. Колхозра агитмассӑллӑ ӗҫ те тивӗҫлӗ вырӑнта мар. Р. Николаевӑпа М. Иванова агитаторсем кӑҫал колхозниксем хушшинче пӗр хутчен те каласу ирттермен. Колхозра стена хаҫачӗ те тухмасть

И. ГРИГОРЬЕВ

УЙӐХЛӐХРА НАЧАР ӖҪЛЕРӖҪ

Ҫӗмӗрле районӗнчи «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхоз тырпул пухса кӗртес ӗҫре калама ҫук кая юлса пырать. Ӗҫ ҫакӑн пек пулса пыни пӗтӗмпех кунта ӗҫ дисциплини начаррине тата колхозри руководительсем тӑрӑшманнинчен килет. Кунта юлашки кунсенче авӑн ҫапма пачах пӑрахрӗҫ. Уйри ҫӗмелсене ҫурри те турттарса, капана хывса пӗтермен. Государствӑна тырӑ тата ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ парас ӗҫсем те кунта ытла та ҫителӗксӗр пулса пыраҫҫӗ. Колхоз паянхи куна ҫитсе те выльӑх кӑшманӗпе чӗкентӗре кӑларса пӗтермен. Анчах колхоз председателӗ Ефатеров тата ревизи комиссин членӗсем колхозри ӗҫсене хӑвӑртлатас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. «Заря» тата Сталин ячӗпе тӑракан колхозсенче те ӗҫсем юлса пыраҫҫӗ. Ку колхозсен тата 12 гектар ҫӗрулми кӑлармалла.

Ив. СОРОКИН.

Суйлав Положенине ӑнлантараҫҫӗ

ЧУРАЧАК. Шупуҫ ял Советӗнчи агитколлектив суйлавҫӑсене «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» ӑнлантарса парас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлет. Ял Советӗнче пурӗ 4 колхоз, кашни колхозрах суйлав законне тимлӗн вӗренеҫҫӗ. Пур колхозра та суйлав Положенине вӗрентес тӗлӗшпе 3-шер занятти пулса иртнӗ. Суйлав Положенине ӑнлантарас ӗҫе агитаторсем хуҫалӑх ӗҫӗсемпе сыхӑнтарса туса пыраҫҫӗ. Агитаторсенчен уйрӑмах М. Никитин, Я. Иванов тата Н. Федоров юлташсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем суйлав Положенине е ӗҫленӗ ҫӗрте, е килӗрен ҫӳресе ӑнлантарса параҫҫӗ.

ҪӖРПӲ. «Ӗмӗт» колхозри пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ Н. Иванов колхозниксене кашни каҫах шкула пухса суйлав Положенине ӑнлантарса парать. Унта 60—70 ҫын пухӑнать. Ваттисемпе пӗрлех суйлав Положенине вӗренме шкула комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем те пухӑнаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, суйлав законне колхозниксене ӑнлантарса парас тӗлӗшпе кашни бригадӑрах агитаторсем ӗҫлеҫҫӗ.

А. ИВАНОВ.

СӖНТӖРВӐРРИ. (Телефонпа). Районри колхозсенче суйлав Положенине вӗренес ӗҫ сарӑлса пырать. Киров ячӗпе тӑракан, «Шордан», «Восток» тата «1-ое мая» колхозсенче агитаторсем колхозниксене суйлав Положенийӗ ҫинчен ӑнлантарса параҫҫӗ. Вулав ҫурчӗсенче, колхоз правленийӗсенче ӑнлантарса панисӗр пуҫне, агитаторсем авӑн ҫапнӑ ҫӗре тухаҫҫӗ.

«Кустарь» колхозра суйлав Положенине вӗренес тӗлӗшпе ятарласа витрина организациленӗ.

В. ИЛЬИН.

НАЦИОНАЛЬНОҪСЕН СОВЕТНЕ СУЙЛАС ТӖЛӖШПЕ ӖҪЛЕКЕН РЕСПУБЛИКӐРИ СУЙЛАВ КОМИССИЙӖСЕН ЧЛЕНӖСЕМ ПУЛМА КАНДИДАТСЕМ ТӐРАТНИ

АРМЕНИ

ЕРЕВАН, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Арменири обществӑллӑ организацисем Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Республикӑри суйлав комиссийӗн членӗсем пулма кандидатсем тӑратма пуҫланӑ.

Аслӑ шкулсен тата наукӑпа тӗпчев учрежденийӗсен работникӗсен профсоюзӗн республикӑри комитечӗн президиумӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. Ларура профсоюз суйлав кампанине хутшӑнса ӗҫлесси ҫинчен сӳтсе-явнӑ.

Ларура Армян ССР Наука академийӗн вице-президенчӗ Амбарцумян академик сӑмах тухса каланӑ. Вӑл Республикӑри суйлав комиссийӗн членӗ пулмашкӑн Армян ССР Наука академийӗн действительнӑй членне Егиазаров академика кандидата тӑратма сӗннӗ. Егиазаров академик—питех те паллӑ ученӑй, активлӑ общественник. Ӑна Республикӑри суйлав комиссийӗн составне кӗртме кандидата тӑратнине историллӗ наукӑсен кандидачӗ Нерсесян юлташ т. ыт. те ырланӑ.

Вара президиум Иван Васильевич Егиазаров академика Республикӑри суйлав комиссийӗн членӗ пулмашкӑн кандидата тӑратма пӗрсаслӑн йышӑннӑ.

Армени Осоавиахимӗн Центральнӑй Совечӗн Республикӑри суйлав комиссийӗн членӗ пулмашкӑн Совет Союзӗн Геройне Гедеон Айрапетович Михаэляна кандидата тӑратма йышӑннӑ.

Ереванри коммунистсен организацийӗ Республикӑри суйлав комиссийӗн членӗ пулмашкӑн Арменири Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Ереван хула комитечӗн секретарьне Бабкен Ашотович Аствацатуряна кандидата тӑратнӑ. Пуҫламӑш шкулсен работникӗсен профсоюзӗн ҫав союзӑн Центральный Комитечӗн Председателӗн Акоп Мкртичевич Налбандян кандидатурине тӑратнӑ. Арменири театр тӗлӗшпе ӗҫлекенсен обществи Армян ССР халӑх артисчӗн Гурген Джанибекович Джанибекян кандидатурине сӗннӗ.

АЗЕРБАЙДЖАН

БАКУ, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Азербайджанра СССР Верховный Совечӗн Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Республикӑри суйлав комиссийӗн членӗсем пулмашкӑн кандидатсем тӑратма пуҫланӑ.

Бакури нефтяниксем чапа тухнӑ буровой мастерӑн, Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗн Рустам Рустамов кандидатурине пурте пӗрсаслӑн сӗннӗ.

Агдамски районри «Бакински рабочи» ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксем Республикӑри суйлав комиссине кандидат тӑратасси ҫинчен сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн комисси членӗ пулмашкӑн артельти звено пуҫлӑхне стахановкӑна Геок-Гез Кадырована кандидата тӑратма йышӑннӑ.

Республикӑри суйлав комиссийӗн членӗсем пулма тӑратнӑ кандидатсем хушшинче ҫаксем пур: гварди генерал-майорӗ Вишневский (ӑна Азербайджанри Осоавиахим Совечӗн Президиумӗ сӗннӗ), Азербайджанри комсомолӑн Центральный Комитечӗн секретарӗ М. З. Бабаев, Азербайджан ССР Наука академийӗн действительнӑй членӗ Мир Али Кашкай тата ыттисем те.

Хĕрлĕ Çарăн паллă полководецĕ

(М. В. Фрунзе вилни 20 çул тултарнă май)

1907 çулхи мартăн 24-мĕшĕнче Владимир губернаторĕ Шуя уездĕнчи Лавров исправникрен çакăн пек телеграмма илнĕ: «Шуя хулинче округри агитаторе Арсение арестленĕ. Пур фабрикăсем те ĕçлеме чарăнчĕç, рабочисем çав Арсение ирĕке кăларма ыйтаççĕ. Тытăçусем пулас пек туйăнать. Пире сахалтан та икĕ рота салтак кирлĕ пулать».

Шуя хулинчи рабочисем «Арсений» агитатора—Михаил Фрунзе большевика питĕ юратнă. Вăл рабочисен çемьине пырса кĕнĕ, вĕсемпе пĕрле мĕнпур хура шурра тÿссе ирттернĕ...

1904 çулта Фрунзе Петербургра большевиксен партине кĕрсе профессионал-революционер пулса тăнă. Вăл—çулăмлă оратор тата çав тери ăста организатор—яланах рабочисемпе пĕрле пулнă. Шуяра тата Иваново-Вознесенскинче Фрунзе боевой дружинăсем тунă, стачкăсем организациленĕ. 1905 çулта, декабрь уйăхĕнче, Красная Пресняри баррикадăсенчи хĕçпăшаллă восстани вăхăтĕнче, вăл Иваново-Вознесенскипе Шуя ткачĕсен отрядне ертсе пынă.

1906 çулхи март уйăхĕнче РСДРП-ăн Иваново-Вознесенскри организацийĕн делегачĕсемпе пĕрле Фрунзе Стокгольма партин IV-мĕш съездне пынă. Çакăнта вăл чи малтанхи хут Ленинпа, Сталинпа тата Ворошиловпа тĕл пулнă.

Патша правительстви Михаил Васильевича темиçе хутчен те арестленĕ. Икĕ хутчен ăна вĕлермелле суд тунă, анчах та общество протест тунине пула çав приговорсене улăштарса ăна тĕрмене хупмалла тата каторгăна ямалла тунă. 1914 çулта Фрунзене Çĕпĕре—Иркутск кĕпĕрнине, Верхоленск уездĕнчи Манзурка ялне ĕмĕрлĕхе ссылкăна янă. Фрунзе пурăннă çурта политика тĕлĕшĕпе айăпласа ссылкăна янă çынсем час-часах пухăннă. Унта юлашки вăхăтри ларутăрăва, фронтсенчен килекен хыпарсене сÿтсе-явнă. Вĕсем Фрунзе вăрçă ĕçĕсем çинчен каласа панине итлесе карта патĕнче нумайччен тăрса ирттернĕ.

1915 çулта Фрунзе ссылкăран тарнă. Малтанах вăл Читана çитнĕ, унтан Мускава пынă. 1916 çулта парти ăна салтаксем хушшинче революциллĕ ĕç тума Хĕвеланăç фронтне янă. Вăл, Михайлов хушаматлă пулса, Минскри пĕтĕм Российăри Земски союзра ĕçленĕ, 10-мĕшпе 3-мĕш çарсенче большевиксен вăрттăн организацийĕсене тунă.

Октябрьти революци хыççăн Фрунзе Иваново-Вознесенскпа Ярославль кĕпĕрнисенче партипе советăн пысăк ĕçне туса пырать. Михаил Васильевич Фрунзе округри военком пулса ĕçлесе совет влаçне çирĕплетессишĕн кĕрешет, рабочисене çар ĕçне вĕрентессине организацилет, рабочисен отрячĕсене туса вĕсене çамрăк Совет республикине хÿтĕлеме фронта ăсатать. Çак йывăр çулсенче Фрунзе хăй политика, государство тата çар деятелĕ пулнине кăтартса парать. Парти ирĕкне, Ленинпа Сталинăн шухăшне кăтартăвĕсене М. В. Фрунзе питĕ тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырать, вăл Тăван çĕршыва çав тери парăнса ĕçлет.

1918 çулхи декабрь уйăхĕнче Хĕвелтухăç фронтĕнче питĕ йывăр положени килсе тухнă: Колчак республикăна хăратса тăнă. М. В. Фрунзене 4-мĕш çарăн командующийĕ туса хураççĕ. Пĕр уйăх хушши тăрăшса ĕçленĕ хыççăн, тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ вăхăтра, Фрунзе çарăн вăрçăри пултарулăхне ÿстернĕ, дисциплинăна çирĕплетнĕ, çарсенчи политикăллă ĕçе лайăхлатнă. 1919 çулхи март уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар Уралти шурă казаксене хирĕç татăклă наступлени пуçласа ярать. Часах Фрунзе Хĕвелтухăç фрончĕн кăнтăрти ушкăнĕн командующийĕ пулса тăрать. Фрунзе туса хатĕрленĕ план тăрăх, Хĕрлĕ Çар Бузулук районĕнчен шуррисене питĕ вăйлăн пырса çапать.

Колчак çарĕ текех ĕнтĕ хирĕç тăма пултарайман. Вăл чакса пынă. 1919 çулти июлĕн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Ĕпхӳ хулине илнĕ. Ĕпху патĕнчи операцине



ăнăçлă ирттернĕшĕн М. В. Фрунзене Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

Туркестан фронтĕнчи çарсене ертсе пырса Фрунзе Беловăн шурă казаксен çарне пĕтерсе тăкать. Çак вăхăтра пирĕн çĕршыв питĕ йывăр кунсене пурăнса ирттернĕ: Деникин Курск патне çывхарса пынă. Фрунзе операцисене ăнăçлă туни центра Туркестанпа çыхăнтарма май панă. Кунта икĕ çул хушши пухса илнĕ çĕрмамăкĕн запасĕ пулнă.

1920 çулхи çуркуннепе çулла Фрунзе ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар белогвардеецсен Семиреченскри фронтне пĕтерсе тăкать те эмира хирĕç восстани пуçласа янă Бухара ĕççыннийĕсене пулăшу парать.

М. В. Фрунзе хăйĕн вăрçă ĕçĕнчи талантне Кăнтăрти фронтра, Врангеле хирĕç çапăçнă çĕрте туллин кăтартса парать. Хĕрлĕ Çарăн чи пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри—Врангеле Крымра аркатса тăкни—Фрунзе ячĕпе çыхăнса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Фрунзе ертсе пынипе Сталинăн стратегиллĕ планне пурнăçа кĕртсе, Çурçĕр Тавририе Врангелĕн чи лайăх çарĕсене аркатса тăкнă. Белогвардеецсен пĕчĕк пайĕ çеç Крыма тарса кĕрсе Перекоппа Чонгар хÿтлĕхĕсем хыçне пытанма пултарнă. Пирĕн çарсем çав хÿтлĕхсене штурмласа илме хатĕрленĕ. Михаил Васильевич çĕренкунĕн чаçсенче пулнă, вĕсен хатĕрленĕвне хăй тĕрĕслесе пынă.

Врангеле аркатса тăкмалли план çав тери хăюллă пулнă, ăна питĕ тĕплĕн туса хатĕрленĕ. Çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен вĕрекен çил Сиваш шывне тинĕселле хăваласа кайнипе усă курса, Фрунзе Врангеле Сиваш урлă каçса тылран пырса çапма йышăнать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Перекоппа Чонгар хÿтлĕхĕсене те штурмлама палăртса хунă.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр чаçĕсем çав плана мухтавлăн пурнăçа кĕртнĕ. Врангеле аркатса тăкни Фрунзе тунă операцисенчен чи лайăххи пулса тăрать. Çапла вара граждан вăрçин юлашки пысăк фронтне пĕтерсе тăкнă.

Граждан вăрçи пĕтнĕ хыççăн Фрунзе Хĕрлĕ Çара тĕреклетес тĕлĕшпе нумай ĕçлет. Вăл Украинăпа Крымри çарсен командующийĕ пулнă. 1924 çултанпа вăл Наркомвоенморăн заместителĕ, унтан Реввоенсовет председателĕ тата Наркомвоенмор пулнă. М. В. Фрунзе ертсе пынипе 1924 çулта пирĕн çара тĕпренех улăштарнă. Çак улшăну ĕнтĕ пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен малашнехи строительствин никĕсĕ пулса тăнă. Хĕрлĕ Çарта единоначали принципне туса хатĕрлес тата ăна пурнăçа кĕртес шухăша чи малтан Фрунзе каласа панă. Вăл çапла каланă: «...Пирĕн çарта задачăсене хăйсем тĕллĕн татса нимле пултаракан çирĕп, пуçарулла тата ответлă çынсем пуçпулса тăмалла. Пирĕн кирек епле лару-тăрура та çухалса кайман командирсем пулмалла. Вĕсем тивĕçлĕ решенисене хăвăрт йышăнма пултарччăр, çав решенисене пурнăçа кĕртнишĕн ответ тытчăр тата вĕсене пурнăçа çирĕппĕн кĕртсе пыма пĕлччĕр». Пурнăç ĕнтĕ М. В. Фрунзен çак сăмахĕсен чăнлăхне кăтартса пачĕ.

Гитлерла Германие тата Японие хирĕç вăрçнă вăхăтра Хĕрлĕ Çара талантлă та ирĕклĕ командир-единоначальниксем ертсе пычĕç. Çакă ĕнтĕ фашистла захватчиксене аркатса тăкма май пачĕ. Тĕнчери демократиллĕ мĕнпур халăхсене ирĕклĕхпе мир туса пачĕ.

Ленинпа Сталин вĕрентнĕ паллă деятель М. В. Фрунзе Ленин идейисене çиеле кăларас ĕçре Совет государствин тавах та темиçе тĕрĕслевре пулмаллине малтанах курса тăнă. М. В. Фрунзе çапла каланă: çĕршыва хÿтĕлеме хатĕрлесси пĕтĕм халăхăн ĕçĕ пулса тăрать. «...пирĕн хамăрăн çĕршыври хуçалăха, хамăрăн экономикăна промышленность енĕпе илсен те, ялхуçалăх енĕпе илсен те мирлĕ вăхăтрах çĕршыва хÿтĕлес ĕç нушисене тивĕçтерме шута илсе тăвас пулать». Хĕрлĕ Çара Фрунзе активлă пулма вĕрентсе пынă. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене Фрунзе тăшмана курайми пулма, хăюллă та тÿрĕ кăмăллă пулма вĕрентнĕ.

Совет государствин паллă деятелĕ пулнă май, Фрунзе ленинла-сталинла наци политикине Туркестанра пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç тунă, вăл Украинăра совет влаçне çирĕплетнĕ. ССР Союзĕн малтанхи Конституцине тăвас ĕçре Сталинăн çывăх помощникĕ пулнă.

М. В. Фрунзе сăнарĕнче чăн-чăн большевик-революционера тивĕçлĕ пур паллăсем те пĕтĕçсе тăраççĕ. Мĕн виличченех вăл халăхшăн паттăррăн та тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕ. Унăн большевиксен партийĕн интересĕсемсĕр пуçне урăх интерессем пулман, унăн тăван халăхăн ырлăхĕшĕн шухăшлассисĕр пуçне урăх шухăш пулман.

Михаил Васильевич Фрунзе 1925 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕнче вилнĕ. Вăл вилни Совет государствишĕн питĕ йывăр çухату пулчĕ. Ăна пытарнă чухне Сталин юлташ çапла каланă:

«...Фрунзе юлташ вилни пирĕн ретрен хальхи вăхăтри чи таса, чи тÿрĕ кăмăллă та хăрама пĕлмен революционерсенчен пĕрне илсе кайрĕ. Фрунзе юлташ вилнипе пирĕн парти хăйĕн чи шанчăклă та чи çирĕп дисциплинăллă руководителĕсенчен пĕрне çухатрĕ. Фрунзе юлташ вилнипе Совет влаçĕ пирĕн çĕршывпа пирĕн государствăн чи хăюллă та ăслă строителĕсенчен пĕрне çухатрĕ. Фрунзе юлташ вилнипе Хĕрлĕ Çар чи юратакан та савакан руководительсенчен тата Хĕрлĕ Çара тăвакансенчен пĕрне çухатрĕ».

М. В. Фрунзе вилнĕ хыççăнхи 20 çул хушшинче Хĕрлĕ Çар хăватлă вăй пулса тăчĕ. Вăл историри чи пысăк вăрçăра çĕнтерÿ турĕ. Çак çĕнтерÿре ĕнтĕ хăйĕн мухтавлă пурнăçĕпе талантне Хĕрлĕ Çарăн хăватлăхне çирĕплетес ĕçе панă, ăна техника енчен хĕçпăшаллантарас, унăн боецĕсемпе командирĕсен ăсталăхне аталантарас ĕçе панă Фрунзе юлташăн мухтавлă паттăрлăхĕ палăрса тăрать.

А. ДЕНИСОВИЧ.

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине Лондона Совет делегацийĕ пырса çитни

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 28-мĕшĕнче Лондона Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине Совет делегацийĕ çитнĕ. Делегацие Н. А. Михайлов юлташ пуçпулса ертсе пырать. Аэродромра делегацие Совет Союзĕн Англири посолĕ Гусев юлташ, Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине пухас тĕлĕшпе ĕçлекен хатĕрлÿ комитечĕн членĕсем тата Совет Союзĕн Лондонри посольствин сотрудникĕсем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

ПОЛЯК ÇАМРĂКĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ СОВЕТ СОЮЗĔНЧЕ ПУЛНИ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ВАРШАВА, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăн пичет агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕнчен Польшăна таврăннă поляк çамрăкĕсен делегацийĕн членĕсем совет çамрăкĕсен ĕçĕсемпе ăнăçăвĕсем çинчен ăшă кăмăлпа каласа параççĕ. Польшăри хаçатсен представительне делегаци членĕ Обрончка çапла каланă: «Эпир Совет Союзне совет çамрăкĕсемпе тата вĕсем пĕтĕм общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăнса тăнипе паллашма кайрăмăр. Эпир çавăн пекех тата хамăрăн хĕвелтухăçĕнчи туслă кÿршĕн çамрăкĕсемпе çыхăнасшăн пултăмăр; иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче çав çамрăксем калама çук паттăррăн çапăçни пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе савăнтарнăччĕ.

Пире Мускавпа Ленинградра калама çук ăшшăн кĕтсе илчĕç. Совет çамрăкĕсен представителĕсене, уйрăм илсе кăтартсан, Польшăри çамрăксен организацийĕсен килĕштерÿ комиссийĕ мĕнле ĕçлени тата çав организацисем государствăн чи паха задачисене пурнăçа кĕртес ĕçре пĕр-пĕрипе мĕнле килĕштерсе ĕçлени интереслентерчĕ.

Совет çамрăкĕсем хăйсен производствăллă квалификацине ÿстерме çав тери хытă тăрăшни пире тĕлĕнтерсех ячĕ,—тенĕ юлашкинчен Обрончка. — Совет çамрăкĕсем ĕç çине çав тери тимлĕн пăхаççĕ, вĕсем хăйсем тăрăшмасăр пĕтĕм обществăн пурнăçне лайăхлатма май çуккине пĕлсе тăраççĕ».

Делегаци членĕ Дрюль совет çамрăкĕсем пĕтĕм çĕршывăн пурнăçĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнипе палăртса панă. Пĕрлешнĕ çамрăксем, хăйсен государствине тăвас шухăшпа пурăнакансскерсем, мĕн тума пултарнине эпир лайăх ăнланса илтĕмĕр, — тенĕ вăл. — Совет Союзĕнче поляк çамрăкĕсене лайăх пĕлни курăнчĕ».

БОЛГАРИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ КАЛАНĂ СĂМАХ

СОФИЯ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 26-мĕшĕнче Болгарин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Петко Стайнов радиопа сăмах тухса каланă, вăл Болгари союзлă державăсемпе перемири килĕшĕвĕ туни çулталăк çитнĕ май тухса каланă.

«Çав перемири килĕшĕвне алă пусса, эпир вăрçа пĕтерсе лартрăмăр. Вăл вăрçа Болгари халăхĕ нихăçан та ырламан. Çав телейсĕр вăрçа Великобританипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене хирĕç Болгари пуçĕнче тăнă çынсем пуçласа янă. Вĕсем ăна тепĕр шухăшламасăр тата хăйсен чăн хуçине—нацистла Германие—юрасшăн пулса пуçласа янă.

1944 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнче Болгари халăхĕпе çарĕ мĕнпур союзниксем шанма пултаракан çĕнĕ халăх правительствине туса хума çĕкленмен пулсан, Отечественнăй фронт правительствине туса хуман пулсан, пирĕн государствăпа халăхăн кунçулĕ хальхинчен нумай пачартарах пулнă пулĕччĕ. Отечественнăй фронт, кая юлса пулин те, тытăм ĕçне хăйĕн аллине илме тата мĕнпур союзниксем шанса тăракан правительство туса хума пултарчĕ: союзниксем çав правительствăпа кăна перемири тума килĕшрĕç.

Эпĕ кунта уççăнах çапла каласшăн: эпир алă пуснă перемири килĕшĕвĕ ун чухне тума пултарнă чи лайăх килĕшÿ пулса тăрать. Çакă вăл ак мĕнтен килчĕ: Германи союзникĕсем пулнă мĕнпур государствăсенчен, перемири тунăскерсенчен, пĕр Болгари кăна чăн-чăн халăх правительстви туса хучĕ. Çав правительствăн тымарĕсем халăхра. Вăл правительствăна çĕнтерÿллĕ аслă державăсем шанчĕç. Çĕнтерÿллĕ аслă державăсем, çав правительствăпа перемири çинчен калаçма тата килĕшÿ туса алă пусма хапăл туса, ăна йышăнчĕç. Апла пулман пулсан, аслă державăсем унпа калаçман пулĕччĕç. Перемирин çав çĕнĕ лайăх условийĕсене шута илсе, правительствăн хăйĕн обязательствисене тÿррĕн пурнăçа кĕртмелле пулнă. Эпир перемирин пур условийĕсене те кирлĕ пек пурнăçа кĕртрĕмĕр. Ку çеç те мар, перемири килĕшĕвĕ хушассине е ют çĕршывсенчен калассине кĕтмесĕрех, эпир хамăр ирĕкпех, Болгари халăхĕн ирĕкĕпех хамăрăн пĕтĕм çара фашистла Германие хирĕç вăрçа ятăмăр. Македонипе Сербире Болгари çарĕсем нимĕçсене умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапрĕç. Нумай юн тăкса, нимĕçсене Греци территорийĕнчен хăвăртрах тухса каймалла туса хучĕç. Çапла вара вĕсене йĕркеллĕн каялла чакма май памарĕç. Йĕркеллĕн каялла чакнă пулсан, нимĕçсем Грецие пĕтĕмпех çаратса пĕтерпĕ пулĕччĕ. Хăйĕн çарĕсем çавăн пек паттăррăн çапăçнине пула, Болгари Македонипе Сербие Германи çарĕсенчен часрах тасатма пулăшрĕ. Çапла вара Болгари çарĕ тăванла çĕнĕ Югославие туса хурас ĕçе хăвăртлатма пулăшнипе савăнса мухтанма пултарать».

«Ытти çĕршывсенчен калассине кĕтмесĕрех,—тенĕ малалла Стайнов,—эпир ирĕклĕхшĕн çапăçнăшăн е Пĕрлешнĕ нацисен ĕçне кăмăлланăшăн асапланнă мĕнпур гражданисене—хамăрăннисене те, ют çĕршывсенне те—ирĕке кăлартăмăр. Еврейсене хирĕç йышăннă мĕнпур мерăсене эпир хамăрах пĕтерсе лартрăмăр. Болгари пуçĕнче тăнă çынсем, нимĕçсене юрасшăн пулса, çав мерăсене йышăннипе Болгари халăхĕн ырă кăмăлне намăслăн пăсрĕç. Мĕнпур фашистла организацисене эпир хамăрах салатса ятăмăр, çав организацисем Болгари халăхĕ хушшинче ыттисене пусмăрлас шухăшсем сарса пурăнатчĕç. Власть органĕсем ют çĕршывсен территорийĕсенчен илсе тухнă мĕнпур пурлăха таварса парас тĕлĕшпе эпир хамăрах кирлĕ мерăсем йышăнтăмăр. Пирĕнпе пĕрле Германие хирĕç çапăçнă вăхăтра союзниксен çарĕсен пирĕн çĕр урлă каçмала пулчĕ е пирĕн çĕрте чарăнса тăмалла пулчĕ; çав çарсене эпир хамăр пулăшма пултарнă таран пулăшрăмăр.

Халĕ ĕнтĕ, вăрçă пĕтнĕ хыççăн тата эпир перемири условийĕсене пурне те пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, Болгари çавăн пек тăрăшнине ыттисем тивĕçлипе хака хурассине шанса кĕтсе тăратпăр. Аслă державăсем, пĕлтĕр Мускавра пирĕнпе пĕрле перемири килĕшĕвне алă пуснăскерсем, çакăнтан кирлĕ выводсем тăвассине кĕтсе тăратпăр».

ЮГОСЛАВИН ВĂХĂТЛĂХ ХАЛĂХ СКУПЩИНИ ЙЫШĂННĂ РЕШЕНИСЕМ

БЕЛГРАД, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин Вăхăтлăх халăх скупщинин президиумĕ, учредительнăй пухăва пухмалли вăхăт çывхарнă май, Вăхăтлăх халăх скупщинине салатса ярасси çинчен указ йышăннă. Президиум тата финанс министрĕ Жуйович сĕннĕ законсене — государство бюджечĕ çинчен, кредит йĕрки çинчен тата тÿрĕ налогсем çинчен калакан законсене—йышăннă.

Учредительнăй пуху пухас ĕçсен министрĕ Кардель сĕннĕ тăрăх, президиум учредительнăй пухăва депутатсем суйламалли закон çумне хушса çырнине йышăннă. Çав хушса çырнинче каланă тăрăх, учредительнăй пухăва суйланă чухне кандидатсен списокĕсен ещĕкĕсемпе пĕрле «списоксăр ещĕк» те кăларса лартмалла. Пĕр списокри кандидатсемшĕн те сасăлама килĕшмен суйлавçăсем хăйсен бюллетенĕсене çав «списоксăр ещĕке» яма пултараççĕ.

Хăй çавăн пек тума сĕннине хÿтĕлесе, Кардель ларура çапла каланă: «Списоксăр ещĕк» кăларса тăратни суйлава демократиллĕ йĕркепе ирттерме тата халăх кăмăлне чăн-чăн ирĕклĕн палăртма май парать. «Çакă вăл демократие хирĕçле майсемпе усă курса, халăх ирĕкне хирĕç пырса, влаçа сахалтарахăшĕн аллине парма тăрăшакансене çапă ответ пулса тăрать», тенĕ Кардель.

Кардель сĕннине президиум пĕрсасăн йышăннă. Вăхăтлăх халăх скупщинин президиумĕ çавăн пекех тата çынсене çартан киле ярасси çинчен, пурне те çичĕ çул вĕрентесси çинчен тата ытти ĕçсем çинчен калакан законсене йышăннă.

ГРЕЦИРИ МОНАРХИСТСЕН ХАÇАЧĔН ФАЛЬШИВКИ

АФИНЫ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 25-мĕшĕнче монархистсен «Эллиником Эма» хаçачĕн сучĕ вĕçленнĕ. Çав хаçата Грецири коммунистсен партийĕн лидерĕ Захариадис суда панă, ăна вăл нумаях пулмасть Захариадиспа вырăс çарĕнчи югослав офицерĕн Греци хирĕç тунă суя «договорне» пичетлесе кăларнăшăн суда панă.

Суда прокурор енчен Захариадиссăр пуçне ЭАМ-ăн нумай руководителĕсемпе паллă деятелĕсем свидетель пулса пынă, монархистла хаçата хÿтĕлекен адвокатсем енчен—«хура фронтăн» пуçлăхĕсем Гонатас, Александрис, Палларис, çавăн пекех тата шалти ĕçсен министрĕ пулса ĕçленĕ Цепос свидетеле пынă.

Прокурор свидетелĕсем çав хаçат пичетленĕ «договор» суя пулнине тата ăна пичетлени Грецири коммунистсен партине элеклемелли аплă кампанин пĕр ĕçĕ пулса тăнине кăтартса панă. Свидетельсем, çак вăрçă историйĕпе Греци оккупациленин историйĕнчен нумай примерсем илсе кăтартса, коммунистсем Грецин чăн-чăн интересĕсене хÿтĕленине кăтартса панă. Григориадис генерал хăйĕн сăмахне çапла каласа вĕçленĕ: «Эпĕ коммунистсен партийĕнче тăмастăп, анчах та эпĕ кашни грекăн халăхшăн чи йывăр кунсенче коммунистсем пулнă пек патриотсем пулмалла тесе шухăшлатăп». «Эллиником Эма» хаçат çав «договорăн» подлинникĕ шалти ĕçсен министрĕн Цацосăн аллинче, тесе каланă пулин те, хÿтĕлекен адвокатсен свидетелĕ Цацос çав «документ» суя документ пулнине йышăннă.

Суд çав хаçат пичетленĕ «договор» суя договор пулнине йышăннă. Çапах та элекçĕсене, вĕсен элекĕ «тавлашса калама ÿпала» пулнă тесе, тÿрре кăларнă.

БАРДОШИ СУТĂНЧĂКА СУД ТУНИ

БУДАПЕШТ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 29-мĕшĕнче Будапешт хулинче Венгри премьер-министрĕ пулнă Ласло Бардошие суд тума пуçланă. Ку вăл Венгрири чи паллă вăрçă преступникĕсене суд тăвас ĕçе пуçласа яни пулать.

Суд Будапештри консерватори залĕнче пырать. Залра халăх тул-тулли. Унта демократиллĕ партисен представителĕсем, Венгрин ют çĕршывсен журналисчĕсем нумай пухăннă. Суда халăх сучĕн председателĕ доктор Майор Акош председатель пулса ертсе пырать. Айăплакансем —халăх прокурорĕ Фенеши Ференц тата прокурор Салаи Шандор. Хÿтĕлекен— доктор Берент Бела.

Суд ларăвне уçнă чухне Майор Акош ку процесс питĕ паллă процесс пулса тăнине асăрхаттарнă. Ун хыççăн айăпласа çырнă акта вуласа панă. Айăпласа çырнă актăн тĕп пункчĕсем çаксем: Бардоши, Югославипе ĕмĕр туслăн пурăнасси çинчен тунă договора пăсса, Венгри урлă нимĕç çарĕсене янă тата унсăр пуçне Югославие оккупациленме Венгри чаçĕсене янă; закона хирĕç пырса, парламент ирĕк памасăр, Совет Союзне хирĕç вăрçа тухнă; çавăн пекех тата хăйне ирĕккĕн Америкăпа тата Англипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахнă.

Айăпласа çырнă акта вуласа панă хыççăн суд Бардошие допрос тума тытăннă.

США-ри ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Дженерал Моторс» компанийĕн заводĕсенчи рабочисем хыççăн Крейслерăн автомобиль завочĕсенчи рабочисем те забастовка тума йышăннă. Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен ĕç укçине ÿстересси çинчен калаçасси паллă мар вăхăтлăха чарăнса ларнă. Предпринимательсем те, рабочисем те Трумэн ĕç укçи тĕлĕшпе правительство политикине пĕлтерессине кĕтсе тăраççĕ. Трумэн çав политика çинчен октябрĕн 30-мĕшĕнче каласа парать.

Хурçă шăратакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕн председателĕ тата Производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей çапла каланă: Хурçă шăратакан заводсен компанийĕсемпе ĕç укçине хăпартасси çинчен калаçнинчен нимĕн те тухмарĕ, тенĕ. Компанисем профсоюз ыйтнине йышăнман. Çавăнпа профсоюз забастовка тăвасси çинчен рабочисен шухăшне пĕлмешкĕн вĕсене сасăлаттарма йышăннă. 9.000 рабочие яхăн сасăламалла.

Автомобиль компанийĕсемпе хурçă шăратакан компанисем хăйсен завочĕсем туса кăларакан таварсен хакне ÿстермесĕр ĕç укçине ÿстересси çинчен калаçасшăн та мар. Анчах Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕç укçине хăпартас ыйтăва тĕпчесе вĕреннĕ правительство экономисчĕсем промышленность хăйĕн таварĕсен хакне ÿстермесĕрех ĕç укçине 24 процент хăпартма пултарнине кăтартса параççĕ. Ытлашши усламран илсе тăнă налога пăрахăçа кăларнине пула промышленность 10 процент перекетлесе хăварать, вăрçă вăхăтĕнче премисем панă йĕркене пăрахăçа кăларнине пула вăл 9,5 процент перекетлет тата ĕç кунĕнчен ытлашши ĕçленĕшĕн тÿлессине пăрахăçа кăларнине пула 4,5 процент перекетлесе хăварать. Çав перекетлесе хăваракан укçа, çав экономистсен шухăшĕпе, ĕç укçине таварсен хакне ÿстермесĕрех хăпартма май парать. Экономистсем çапла калаççĕ: хальхи вăхăтра рабочисене тÿлекен пĕтĕм ĕç укçи апрель уйăхĕнче тÿленинчен каярах. Ĕç тухăçлăхĕ ÿснĕ, çакă вăл рабочисене ытларах ĕç укçи тÿлеме май парать. Çав экономистсен шухăшĕпе, килес çулхи апрель уйăхĕ тĕлне Пĕрлешÿллĕ Штатсенче ĕçсĕррисен хисепĕ 8 миллион çынна çитет, пĕтĕм ĕç укçи 35 миллиард доллар чухлĕ чакать.

«Промышленниксен наци ассоциацийĕ» экономистсен çав вывочĕсене питĕ хытă критикăлать.

ТУРЦИ РЕСПУБЛИКИНЕ ТУНИ 22 ÇУЛ ТУЛТАРНИ

АНКАРА, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Анатолири агентство çапла пĕлтерет: Турци республикине туни 22 çул тултарнине уявласси паян министрсен совечĕн председателĕ Сараджоглу радиопа сăмах тухса каланипе пуçланнă. Çав сехетрех Турцин тĕрлĕ пайĕсенчен пухăннă 2.000 скаут ытла Халăх площадĕнче Çĕнтерÿ памятникĕ патне пухăннă та унта присяга панă. Унтан скаутсем ялавсем çакса илемлетнĕ урамсем тăрăх стадион патнелле кайнă. Стадионра государство деятелĕсем тата 20.000 çын ытла пулнă.

КĔСКЕН

▲ Хорватире пулнă вăхăтра Совет çамрăкĕсен делегацийĕ Загреб хулине тата ытти темиçе хулана яла пырса кайнă, вăл Тито маршал çуралнă ялта та пулнă.

▲ Октябрĕн 28-мĕшĕнче Прага хулинче парламент çуртĕнче Чехословакин Вăхăтлăх халăх пухăвĕ уçăлнă. Çав пуху йышăннă тăрăх, республика президенчĕ Эдуард Бенеш доктор çитес суйлавччен президент ĕçĕсене туса тăмалла.

▲ Бельги премьер-министрĕ Ван Акер октябрĕн 27-мĕшĕнче çитес вăхăтра Бельги банкне национализацилесси çинчен каласа панă.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене часрах пурнăçлар

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри колхозниксемпе колхознипăсем Октябрь уявне ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленипе, государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнипе кĕтсе илессишĕн ăмăртăва анлăн хутшăнчĕç.

Государствăна аш-какай памалли обязательствăна 58 колхоз, сĕт-çу памалли обязательствăна 38 колхоз, çăмарта памалли обязательствăна 38 колхоз, çăм памалли обязательствăна 53 колхоз тултарнă. «Новая жизнь», «Волгарь», «Советская деревня», «Красное Сормово», Сталин, Калинин, Тимошенко ячĕсемпе тăракан тата ытти колхозсем те государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене пĕтĕмпех тултарнă. Халĕ вĕсем 1946 çулшăн аш-какай, çăмарта параççĕ.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли чи лайăх вăхăтсем иртсе пыраççĕ.

Чăршкасси ял Советĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата çăм памалли обязательствăсене çуррине те тултарман. Апла пулсан та, ял Совет председателĕпе колхоз председателĕ (Юрковпа Миляков юлташсем) ку ĕçре начар ĕçлеççĕ. Çавăн пекех [illegible] Туçа ял Советĕнчи «Память Ленина» колхоз та начар ĕçлет. Государствăна çăмарта памалли плана 30 [illegible] çеç тултарнă. Кунта колхоз председателĕ Афанасьев юлташ ответлăха туймасть, парăпăр-ха, тесе лăпланса ларать.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем государствăна памалли обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе колхозниксемпе уйрăм хуçалăхсем ытла та кая юлса пыраççĕ. Нижер ял Советĕнче (председателĕ Портнов юлташ) кăçал государствăна аш-какай 57 хуçалăх, çăмарта 43 хуçалăх пачах паман. Кунта райуполнаркомзагăн агенчĕ К. Шагитов юлташ ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Райуполнаркомзагăн Т. Агеев, А. Рябин, П. Данилов агенчĕсем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем ялсенче, колхозсенче колхозниксем патĕнче пулмаççĕ, хăйсен ĕçне пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлемеççĕ. Çавăн пекех Маслопром директорĕ М. Краснова юлташ та çу хăй тĕллĕн пухăнасса шанса ларать.

Райпотребсоюз çăмарта пухмалли плана тултарассишĕн тăрăшмасть. Ялсенче çăмарта пухакансен списокне çуркунне тунă та лăпланса ларнă, çу касиччен те нимĕн те ĕçлемен. Райпотребсоюзри ответлă работниксем ялсенче сахал пулаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ ялпо председателĕсем те ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Утаçкассинчи магазин заведующийĕ Аршинова çу касиччен 20.000 çăмарта пухас вырăнне 3.372 çăмарта анчах пухнă. Вăл ялсене тухса килĕрен çÿремест.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене хăвăртрах тултарас тĕлĕшпе халĕ вăхăта сая ямасăр ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕн, Маслопромăн, райпотребсоюзăн, ял Совет тата колхоз председателĕсен ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Октябрь уявне государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнипе кĕтсе илер!

С. РУМЯНЦЕВ.

„СОЦИАЛИЗМ ÇУЛĔПЕ" ХАÇАТ 15 ÇУЛ ТУЛТАРАТЬ

ВĂРНАР. Кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче районри «Социализм çулĕпе» хаçат тухма пуçланăранпа 15 çул çитет. Çав вăхăт хушшинче вăл 1487 номер тухнă.

Хаçат 15 çул хушшинче район умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлас тата ĕççыннисене çав задачăсене пурнăçлама мобилизацилес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕ.

Районри хаçат 1939—1940 çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă. Выставка комитечĕ ăна иккĕмĕш степень дипломпа наградăланă. Кунпа пĕрлех 5.000 тенкĕ укçа тата мотоциклет парса премиленĕ. 1941—1945 çулсенчи Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хаçат хăйĕн ĕçне пĕтĕмпех фронт интересĕсене пăхăнтарса пычĕ. Вăл ĕççыннисене фашистла нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çапса аркатма тата фронта пулăшма çĕклесе пычĕ. Гитлеровецсен тискерлĕхĕсем çинчен çутатса пырса, ĕççыннисене тăшмана курайми пулма вĕрентрĕ.

Хаçат 15 çул тултарнă кун—ноябрĕн 1-мĕшĕнче—редакци селькорсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвне ирттерет. Канашлу тĕлне колхозсемпе предприятисенче тухнă стена хаçачĕсен выставкине организацилеççĕ.

Мирлĕ аталану тапхăрне куçнă хыççăн халăх хуçалăхне ура çине тăратас, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе райхаçат умĕнче те пысăк ĕçсем тăраççĕ. Кунпа пĕрлех, селькорсене ĕçлесси тата стена хаçачĕсене пулăшасси халĕ çителĕксĕр вырăнта тăрать-ха. Районри хаçатăн çав ĕçсене те ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чăбоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-89, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ 2. ф. 6. 59 42. 1 п. л. Тираж 10.000 экз.

НТ 03509